АВТОГРАФ

# РФ тата ЧР культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ Татьяна Шаркова



# Кашни тӗрӗ – калав, шухӑш

***Пултаруллӑ ҫынсемпе паллашма яланах кӑмӑллӑ. Татьяна Шаркова – питӗ ӑшпиллӗ хӗрарӑм, сӑнӗнчен илӗртӳллӗ ӑшӑ кулӑ каймасть. Вӑл каласа панине итлес килет. Аллисем асамлӑ тейӗн: киҫтӗкпе те, йӗппе ҫиппе те тӗлӗнмелле "чӗрӗ" те тарӑн шухӑшлӑ картинӑсем пулса тухаҫҫӗ. Пуканисем мӗне тӑраҫҫӗ тата! Ахальтен мар ӗнтӗ унӑн ӗҫӗсем уйрӑм ҫынсен коллекцийӗсенче те, тӗрлӗ ҫӗршывсенчи тӗнчипе паллӑ музейсенче те упранаҫҫӗ.***

***Раҫҫейӗпе паллӑ тӗрӗ ӑстин пултарулӑх ҫӑлкуҫӗ ӑҫтан тапса тӑрать-ши?***

## КӖСКЕН

Татьяна Васильевна Шаркова 1954 ҫулхи юпа уйӑхӗн 22-мӗшӗнче Елчӗк районӗнчи Кавал ялӗнче ҫуралнӑ. 1979 ҫулта Шупашкарти ӳнер училищинчен вӗренсе тухнӑ, каярах – И.Я. Яковлев ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх педагогика институтӗнчен (халӗ – университет) (1985). 1983 ҫултанпах Ҫӗнӗ Шупашкарти ачасен искусство шкулӗнче ӳнер уйрӑмне ертсе пырать, хӑйӗн пӗлӗвне ҫамрӑксемпе тараватлӑн пайлать. И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университетӗнче те вӑй хунӑ. Профессири пысӑк ҫитӗнӳсемшӗн унӑн ятне "Лучшие люди России" энциклопедин "Одаренные дети – будущее России" хушма кӑларӑмне кӗртнӗ (2008).

Чӑваш Республикин тата Раҫҫей Федерацийӗн культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ. Раҫҫей художникӗсен пӗрлӗхӗн членӗ.

Тӗрӗ ӑстин пултарулӑхӗпе "Три солнца Татьяны Шарковой", "Число как мера чувашской вышивки", "Куклы Татьяны Шарковой-Изратовой" кӗнекесенче туллин паллашма пулать. Фильмсем те ӳкернӗ: "Вышила бы на весь мир узор", "Из вьюги я вышла", "Иероглифы Тора". Кӑҫал тата Чӑваш кӗнеке издательстви хатӗрлесе пыракан "Халӑх ӑстисен опытӗнчен" ярӑмра ҫӗнӗ кӑларӑм кун ҫути курӗ.

## Чун ыйтни

Кашни ҫын чун киленӗҫне шырать. Юратнӑ ӗҫпе пурӑнакансем чӑннипех те телейлӗ. "Ӗҫ пурнӑҫ тытать, ӗҫ телей кӳрет" тесе ахальтен каламан ваттисем. Паллах, кашни ҫыннӑн – хӑйӗн ӗҫӗ-хӗлӗ, хуйхи-савӑнӑҫӗ, пултарулӑхӗ-талайӗ. Пӗри ашшӗ-амӑшӗн ӗҫне малалла тӑсать, тепри пайталлӑ ӗҫ шырать, хӑшӗсем вара ҫутҫанталӑк мӗн панипе усӑ кураҫҫӗ...

Эпир хӗрӗмӗре ача чухне ирӗксӗрлесе музыка енӗпе те, ӳкерме те вӗрентмен. Халь укҫа тӳлесе темле студисене ҫӳрет. Чун ыйтни, юн туртни ӗнтӗ вӑл... Людмила Мускаврa куҫаруҫӑ пулса ӗҫлет, тӗрлӗ ҫӗршыва кайса ҫӳрет. Эпӗ мӗнпе интересленнине яланах асра тытать – тӗрлӗ халӑх пуканисене туянса килсе савӑнтарать мана.







Упăшка та ăнланать ман иленĕве, ялана пулăшса пырать. Техника енĕпе аслă пĕлӳ илнĕ пулсан та çутçанталăк уйрăм туйăм парнеленĕ ăна – илеме асăрхама пĕлет. Йывăр саманасен вăхăтĕнче иксĕмĕр те ӳкереттĕмĕр, сувенирсем хатĕрлесе сутаттăмăр. Астăватăп-ха, фортепьяно туянас тесе самай вăй хунăччĕ. Чăннипе, упăшка енчисем, Шарковсем, пурте – пултаруллă. Хутăш çемьесенче кун пекки час-часах пулать. Ашшĕ – чăваш, амăшĕ – вырăс....

Ман пек арăмпа пурăнма çăмăлах мар пуль. Чи малтан ĕç çинчен шутлатăп, килти ĕç-пуç вара пысăк пĕлтерĕшлĕ мар тейĕн. Ыран выставка тенĕ чух çĕрĕпе алăра киçтĕкчĕ. Килти лару-тăрăва та пăхмастăн. Мăшăрăм вара ман çинчен вĕреннĕ чух çеç ӳкерет тесе шутланă. Кунне виçĕ хут урай çăвасси маншăн мар, паллах. Урăх ĕç валли вăхăт юлмасть те ун пек чух. Урай сĕрсех пурнăçа ирттерес-и?

Есенин, Блок сăввисене вулама питĕ юрататăп. Анчах Есенин пек упăшка кирлĕ мар мана. Пултарулăхĕпе киленетĕп пулсан та ун пек çынпа пурăнаяс çук.

## Юрать, артист пулмарăм

Эпĕ – вăтанчăк çын. Юбилей таврашĕнче тус-юлташсене, артистсене саламлама сцена çине тухасси маншăн – чĕр тамăк. Хам вара пĕчĕк чухне артистка пуласшăнччĕ. Хальхи пуçпа ăнланатăп: артистсен пурнăçĕ питĕ йывăр, юрать-ха çав профессие суйласа илмен. Халь кĕрсе ларатăп та хамăн пӳлĕме – ӳкеретĕп, тĕрлетĕп... Никампа та тавлашмалла мар ман, никама та нимĕн те ăнлантармалла мар.

Тĕнчене мĕнле куратăп – çапла сăнлатăп. Мĕн шутласа хунине пурнăçа кĕртейессĕн хама телейлĕ туятăп. Çамрăк чух ӳкернĕ ытларах, чăваш тĕррипе интересленесси самай каярах пуçланчĕ. Пирĕн вăхăтра ача



чухне пурне те тӗрлеме вӗрентнӗ. Минтер пичӗсем, турӑш ҫаккисем аннесемпе пӗрле ҫӗлесе ӗлккен чечексем тӗрлеттӗмӗр. Анчах ун чухне аппаланнӑ тӗрӗсем пӗрре те чӑваш эрешлӗ марччӗ.

Институтра вӗреннӗ чухне хӗр тантӑшӑм Моисей Спиридонович Спиридонов художникпа, чӑваш ӳнер корифейӗпе, паллаштарнӑччӗ. Ун патне килнех кайса ӳҫреттӗмӗр. Пурнӑҫ ҫинчен ыйтса пӗлетчӗ. Ялта ӳснине пӗлсен канаш панӑччӗ вӑл мана: "Ӗлӗкхи тумтире пуҫтарса тӗпче май пур чух". Пурнӑҫ хӑех ҫакӑн пек парнесем тӑвать тӑрсан-тӑрсан – чунӗпе пысӑк ҫынсемпе паллаштарать. Халь ытларах "кирлӗ ҫынсемпе" тӗл пулма тӑрӑшаҫҫӗ...



Ытти художниксен ӗҫӗсене те ҫӑвар карсах пӑхаттӑмӑр. Питӗ хисеплеттӗмӗр вӗсене. Ҫамрӑк чух ваттисене чунтан хисеплеме ӑс ҫитни, лайӑххине курма пӗлни, вӗренме тӑрӑшни хӑвна та вӗсен шайне хӑпарма пулӑшать.

Каярах Екатерина Иосифовна Ефремовӑпа, Валентина Алексеевна Минеевӑпа паллашнӑччӗ, Александра Ивановна Ильбековӑпа туслашнӑччӗ. Ырӑ ҫынсемпе тӗл пулни тем тери паха. Урӑх ҫулпа та кайма пултарнӑ вӗтха. Художниксем патӗнче килӗнче хӑнара пулни те сӗтел хатӗрлесси таранччен вӗренме пулӑшрӗ. Илемлӗ япаласене курса хаклама та.



Пирӗн ялта хӑнана кайма хитре те таса тумланаҫҫӗ. Халь эпир театра кайма та мӗн тӑхӑнмаллине пӗлместпӗр. Джинс шӑлаварпа ҫӳреҫҫӗ ҫамрӑксем.

Пирӗн енчи ҫынсем ӗҫлеме те, канма та пӗлеҫҫӗ, хуҫалӑха ҫирӗп тытаҫҫӗ – ҫуллачченех кӑвакалпа хӑнана килеҫҫӗ те! Ялти ҫын – вӑр-вар, ирхине тӑватӑ сехет ҫурӑра кӗтӳ хӑвалать. Ҫывӑрса юлма юрамасть. Ҫамрӑк кин-



сене кӳршисем каҫса чӳречерен шаккаса вӑратаҫҫӗ намӑс ан пултӑр тесе. Пӗр-пӗрне пулӑшса-вӗрентсе пырасси пур анатри чӑвашсен.

Яла кайсан кӳршӗсемпе калаҫса тӑранаймастӑп вара. Вӗсем атте-аннепе туслӑ пулнӑ, пире пӗчӗкренех пӗлеҫҫӗ. Тӑван кил ӑшшине халӗ Валери шӑллӑмпа Нина кин тытса пурнаҫҫӗ. Питӗ тӑрӑшуллӑ вӗсем, ырми-канми ӗҫлесе икӗ хутлӑ ҫурт лартрӗҫ. Пахча тулли апат-ҫимӗҫ ҫитӗнтереҫҫӗ. Чечексем...

Мана мӗн савӑнтарать? Эпир туслӑ пурӑнатпӑр. Пӗр-пӗрне пулӑшса, пӗр-пӗрне туртса.

Йӑмӑкпа мухтанатӑп: Галина Изратова керамикӑпа ӗҫлет. Унӑн хӑйӗн пӗр тӗнче тейӗн. Алӑ ӗҫӗ – чунран тухакан япала. Ырӑ кӑмӑлпа ӗҫлемелле тепӗр ҫынна савӑнӑҫ кӳрес тесен. Гальӑн ӗҫӗсем питӗ ӑшӑ. Ман тӗрӗсем те ҫаплах ырӑ вӑйхӑватлӑ пулнине ӗненес килет...

Ача чух улахсем ларнине астӑватӑп. Мункун умӗн юнашар ялсенче вӗрлӗксене ҫыхса, варрине кашта хурса ҫӳллӗ таканккӑ тӑваҫҫӗ иккен. Пирӗн ун пек чуччу тавраш пулман – Миттов картининче курнӑччӗ ӑна пӗрремӗш хут. Эх, шел пулса кайнӑччӗ вара – эппин нумай савӑк самант ҫухатнӑ эпир.

## Музей уҫас килет

Паянхи тапхӑрти иленӳ ман – пуканесем. Хӑш ҫӗршыв пукани чи хитри, чи лайӑххи тесе ыйтаҫҫӗ манран час-часах. Мӗнле тӳрех пӗр халӑха кӑна уйӑрайӑн? Яппунсен питӗ интереслӗ теттисем. Тепӗр тесен, пурин те хӑйне май чаплӑ. Тумӗсем мӗнле чипер – пуҫа тӑхӑнмалли таранччен ҫӗлеҫҫӗ те-ха пуканесем валли. Сӑнӗсем пӗринчен тепри илемлӗрех. Вырӑссем хӑшпӗр пуканесен питне юриех ӳкермен. Ҫапах вӗсен те хӑйнеевӗрлӗхӗ, илӗртӳлӗхӗ пур.

Ӗлӗкренех мӗнрен кӑна ӑсталамаҫҫӗ-ши пуканесене? Улӑмран, хурӑн хуппинчен, тӗртнӗ пиртен, мамӑкран, йывӑҫран, хӑйӑран, куккурусран... Тумӗсене халӑх тӗррипе, шӑрҫапа илемлетеҫҫӗ. Сӑнне ҫиппе ӳкерни те пур.

Ман коллекцире хамӑн вӗренекенӗм ӑсталанӑ пукане те пур. Ҫӳҫне вӗт шӑрҫаран пухнӑ – пӗчӗк хӗрача ӗҫӗ тесе калаймӑн та тӳрех. Китай пукани сунчӑк пулса тӑрать – хӑйне май сувенир. Тепӗр ҫемҫе пуканин урисем ҫине тӳмесем ҫӗлесе хунӑ та ӑна уттарсассӑн шак-шак! туса пырать.

Стенасем ҫинче кавир вырӑнне картинӑсем ман. Ҫынсен серванчӗсенче хрусталь вазӑсем шӑкӑрин ларасҫӗ, ман вара – пуканесем. Музей уҫас ӗмӗтпе пурӑнатӑп та вӗт. Мӗн чуль усӑллӑ урок ирттерме пулать музейра, тем тӗрлӗ темӑсем сӳтсе явма пулать. Яппунсен ачисем шкулта эрнере 12 сехет ӳкереҫҫӗ. Пирӗн вара? Илеме хаклама, упрама мӗн пӗчӗкрен хӑнӑхтармалла. Ӳркенни пӗтерет пире. Ҫӗнӗ ӗҫ пуҫлама хӑрани тата...

## Кашни тетте – пӗр тӗнче

"Чувашские народные игрушки" проектпа ӗҫлерӗм юлашки вӑхӑтра. Ялтан яла ҫӳрерӗм. Хампа пӗрле пӳсмине те, тӗрлӗ тӗслӗ ҫипсене те, хаччине те, сӑрӑ-кисӗтӗксене те чиксе тухнӑ. Упӑшкапа пӗрле машинӑпа ҫӳрерӗмӗр ҫапла. Пӗр-пӗр карчӑка курсанах чарӑнаттӑмӑр. Ал айӗнчи япаласенчен пукане туса кӑтартма







*Амăшĕн –*
*Наталия Павловнăн*
*фронтри сăн ӳкерчĕкĕ*
*(сылтăмри).*
*1943 ç.*

*Ашшĕ – Василий Степанович.*
*1943 ç.*

*Ӳнер училищин студентки.*
*1975 ç.*

*10 çулта*



ыйтаттăм. Манмаççĕ ватăсем ача чухнехине... Чи савăк вăхăт та-ха ĕнтĕ вăл – ачалăх.

Аттепе анне ĕçре чух эпир те йăмăкпа утиял ăшĕнчи мамăка кăларса пуканесем тунине астăватăп. Тем тĕрлĕ вăйă шутласа тупаттăмăр вара. Хальхи ачасене лавккаран илнĕ теттесемпе çеç выляттарас килмест те вĕт.

Мускав, Ульяновск, Санкт-Петербург, Саратов хулисенчи музейсене çитсе килтĕм. Мĕн тери интереслĕ пуканесем куртăм! Пукане вăл тетте çеç мар, йĕрĕх те пулнă. Хăш-пĕр пуканене тумлантарнă еккине çеç тунă ĕлĕк. Ачана сыхлатăр, усал-таврашĕнчен упратăр тесе сăпкана малтан пукане хунă. Пукане туйĕсем çинчен те пурте пĕлетпĕр ĕнтĕ.

Халь эпĕ "Мир чувашской игрушки" кĕнеке хатĕрлетĕп. Ĕлĕк мĕнле теттесемпе выляни çинчен пулать вăл. Мĕн чуль интереслĕ калав илтрĕм, мĕн чухлĕ çĕнни пĕлтĕм тĕрлĕ районта çынсемпе тĕл пулса калаçса.

Пиллĕкмĕш класра вĕренеттĕм-ши – "Коммунизм ялавĕ" хаçатра Николай Овчинников художник çинчен тухнă статьяна вулатăп хайхи. Интересленсе кайнипе аттене "Художник" журнал çырăнса пама ыйтнăччĕ. Пĕр тенкĕччĕ çулталăка. Пĕрремĕш номерĕ килсен типографи сăрă шăршине тӳрех асăрханăччĕ.

Ял çыннисем хаçат-журнал çырăнса илме майне тупнă ун чухне. Çич-сакăр ят килсе тăратчĕ почтăпа. Атте ялан вулатчĕ. Артистсем çинчен саспах вуласа паратчĕ. Мана, студенткăна, намăслантаратчĕ: "Шупашкарта пурăнса çак çынсене те пĕлместĕн-и?" – тетчĕ.

Аннен аслă тетĕшĕ (кукка) Мускавра пурăнатчĕ, посылкăсем ярсах тăратчĕ. Мана валли сăрăсем, киçтĕксем, куçлăх (эп мĕн пĕчĕкрен начартарах курнă), тумтир. Анне кĕçĕн хĕр пулнă та, пиччĕшĕсем ăна юратса пулăшса пынă. "Çинçе пилĕклĕ майра", – тетчĕç мана çамрăк чух. "Эсир хулара пурăннă-им?" тесе ыйтатчĕç ман тума пăхса учительсем...

Аттен çемйи чухăнрах пулнă, тăлăх ӳснĕ вăл. Йывăр пурнăç тутине пĕлекенскер аннене пире шкула сахăр катăкĕсем тем пысăкăш парса янăшăн вăрçатчĕ. Анне вара çитлĕ пурнăçа хăнăхнă та шеллемен апат-çимĕç таврашне.

Нихçан та асран тухас çук: шартлама сивĕ кун шкултан чупса килеттĕм те, анне ман шăнса кӳтнĕ алăсене хăйĕн кĕпи тӳмисене вĕçертсе кăкăрĕ çине хурса ăшăтатчĕ. Кăмака хутнă пулсан та... Халь пур-ши ун пек аннесем?..

## Вăрçăра çуралнă юрату

Анне пире питĕ аслă пĕлӳ парасшăнччĕ, малалла аталанма хистетчĕ. Хăй çамрăклах фронта тухса кайнипе малалла вĕренеймен те. Атте ачисене ялтах хăварасшăнччĕ, ялтах çын шутне кĕртесшĕнччĕ. Ачасене ӳстересчĕ кăна мар, вĕрентсе кăларасчĕ-ха тени пур ялта.

Анне, Наталия Павловна Пчелова, Патреккел хĕрĕ пулнă. Атте, Василий Степанович Изратов – Кавалтанах. Вĕсем вăрçăра паллашнă. Атте пĕр-ик çул кĕçĕнрех пулнă. Пире вăрçăра çуралнă юратăвăн ачисем теме те юрать ĕнтĕ чăннипе.

Кӳршĕсем ялан килсе ӳкерчĕç, хĕллехи каçсенче килте яланах халăхчĕ. Аттен ырă уçă кăмăлĕ туртатчĕ пуль çынсене пирĕн пата. Хĕрарăмсем çăм арлатчĕç, тĕрĕпе ларатчĕç. Ялан вăрçă çинчен калаçатчĕç. Мана кашни каçах П.Хусанкай-

ăн "Таня" поэмине вулаттаратчĕç тенкел çине тăратса. Белоруссире, Польшăра, Венгрире çуртсене мĕнле хăпартни çинчен, вĕсем нӳхрепсене мĕнле тунине аса илсе пирĕн те çапла тума çук-и тесе шутлатчĕç.

Атте вăрçăра пулнă пулин те вăрçă ветеранĕ тесе шутланман. Çăмăллăхсемпе те усă курайман. Апла пулин те нихçан та ӳпкелешместчĕ – характерĕ çирĕпчĕ унăн. Анне – кулак тесе айăпланнисен йышĕнчен, "Пуçри тутăра та сӳсе илчĕç", – тетчĕ. Аппăшĕ темле майпа ылтăн çĕррине пытарса ĕлкĕрнĕ тет...

Вăрçă кăна ан пултăрччĕ тесе кĕлтăватчĕ ялан анне. Шавлă мотор сасси илтĕнсенех карт туртăнса илетчĕ тăшман самолечĕсем килессе сăнаса-сыхласа тăнă разведчик, зенитчица пулнăскер. Ача чухне мĕншĕн ыйтса пĕлмен, ма çырса хуман вĕсем каласа панине? Айван пулнă çав ĕнтĕ. Пасара нуски кайса илнĕ пек, яланхилле йăла пек пулнă та ĕнтĕ вĕсем каласа панине итлесе ларни пирĕншĕн. Халь тин, вăхăт иртнĕçемĕн ăнланатпăр вĕсен ыратăвне.

Атте питĕ тирпейлĕ тумланатчĕ. "Сирĕн аçăртан вăтанатăп эпĕ", – тетчĕ ялти пĕр хĕрарăм. Эпĕ вара паянхи кун та çулланнă арçынсене тĕл пулсан аттепе танлаштаратăп. Хырăнмасăр нихçан та çын çине тухман вăл. Шалти культура пысăк пулнă унăн. Вăл



Мăшăрĕпе Владимир Изосимовичпа. 1975 ç.



Хĕрĕпе Людмилăпа



Амăшĕпе. 2001 ç.

вилнĕренпе вун çичĕ çул иртрĕ. Нумай пулмасть ăна асăнса кульмак пĕсернĕ чухне çумрах тăнăн туйăннăччĕ...

Студент чухне пур хĕр упраç та лайăххине шырать. Хамăр çине пăхма манатпăр вара. Хамăрăн та аталанмалла, çитменлĕхсене пĕтермелле. Çавара вăхăтра хупма пĕлмелле халăх юмахĕнчи карчăка алăк хупма хушнă пек. Арçын хăй сăмахне калать те лăпланать вăл. Хĕрарăмăн малалла вĕрилентерсе ямалла мар чĕнсе-хирĕçлесе.

Хĕрĕх çула яхăн пĕрле пурăнатпăр мăшăрăмпа. Тирĕк-кашăк хытах шăкăртатни те пулнă темелле. Инçе çула пĕрле кайсан мĕн кăна курмастăн: çил-тăманне те, пылчăкне те... Ăслă хĕрарăм упăшка киле сыпса çитсен ăста йăванса каять çавăнтах пĕрле выртать тет. Айванни кăшкăрашать. Йывăрлăхсене пĕрле чăтса ирттермелле. Турри хăех майлаштарса пырать.

Пултарулăхра та çаплах: мĕн чуль нумайрах ĕçлетĕн, çавăн чухлĕ вăйлăрах çутçанталăк хăй пулăшса пырать. Эс арçынна хисеплесен вăл та сана алă çинче йăтса çӳрет. Пĕр-пĕринсĕр мĕнле пурăнмалла? Идеал шыранинче усси çуках. Хăвăнпа юнашарринче лайăх енсене курса çитменлĕхĕсене те йышăнма пĕлмелле.

## Чуна вăратас пулать

Эпĕ сюжетлă картина-панносем тĕрлеме юрататăп. Тĕнчене мĕнле куратăп, çапла ӳкеретĕп. Чăваш халăх эрешĕсемпе тем çинчен те каласа пама пулать. Тĕрĕ утăмĕсен ячĕсем питĕ интереслĕ: сысна ури, чăх ури, чăх чĕппи, кăкшăм, хуран çакки, пăру карти, шапа пĕççи, курак ури, шыв кукри... Халăх вĕсене йăлтах пурнăçран илнĕ, ялти йăла-йĕркепе, çутçанталăкпа çыхăннă вĕсем. Шухăшлă ĕçсем килĕшеççĕ, салфеткăсем, сĕтел виттисем тĕрлеместĕп текех. Икĕ пĕр пек ĕç тăваймастăп – мана тӳрех кичем пулса каять. Интересĕ кирлĕ, хавхалану... Кĕнеке вулатăн та сăнарсем куç умне тухса тăраççĕ – çĕнĕ эскиз çуралать.

Пурнăçра мĕн чухлĕ йывăрлăх, çавăн чухлĕ çын аталанать, ӳсет. Ура хунине те пăхса тăмастăн шалти вăй пулсан. Çăлкуçа хупласа хурсан та шыв тапса тухнă пек. Геннадий Никандрович Волков мана çапла калатчĕ: "Эс малта та ан пул, хыçалта та ан пул..." Мана варринче мĕнле тытса тăрайăн? Мухтав Турра, хам мĕн пĕлнине пĕлетĕп, хама хаклатăп...

Пĕтĕм ĕçĕмсенче – ман ĕмĕтсем, таса шухăш-кăмăл, йывăр вăхăтсенче те телей çинчен, çынна ырă тăвасси çинчен шутланисем. "Пробуждение" паннора, акă, ыйхăран вăранни çеç мар, чунри тĕнчене вăратни. "Упратпăр-и? Чечекленсех тăраятпăр-и" – тепĕр тема. Ĕçмелли шыва та лавккаран илетпĕр те халь, çутçанталăкпа малашне мĕн пулĕ?

Куравсенчен музейсене лекнĕ нумай ĕç пирки "Парнелеме е сутма шел мар-и?" тесе ыйтни те пулнă. Ачасене те килтен ярас килмест те вĕт, анчах вĕсен хайсен çулĕ – малалла утмалла. Ман картинăсем те ачасем пекех – йăваран вĕçсе тухса каяççĕ. Пуласлăхĕ пултăр тесе ĕнтĕ кĕнекесем кăларатпăр. Хăвăн ĕçне хăв та упрамасан, хисеплемесен тепĕр çын хаклĕ-ши? Кашни япалан пурнăçра хăйĕн вырăнĕ пулмалла.

**Пичете Надежда ОСИПОВА хатĕрленĕ**